# Шкул историне - электрон майпа



Чăваш наци вулавăшĕн «Мерчен» тĕпелĕнче Владимир Галошев ÿкернĕ «Кушкă шкулĕ 125 çулта» фильмăн тэта кĕнекен хаклавĕ иртрĕ. Ăна Елчĕк районĕнчи Кушкă шкулĕ 125 çул тултарнине халаллнă. Владимир Галошев - Раççей журналисчĕсен, Чăваш ÿнерçисен пĕрлешĕвĕсен пайташĕ, чăваш тĕнчине сăнлакан нумай кĕнеке тэта фильм авторе.

Мероприяти Чăваш наци конгресĕ пуçарнă «Чăваш Енĕн мухтавлă çыннисем» проектпа килĕшÿллĕн иртрĕ. Уява Чăваш наци библиотекин тĕп специалисчĕ, Чăваш наци конгресĕн культура комитетчĕн ертÿçи Вера Архипова ертсе пычĕ. Мероприяти яланхиллех пуян программăпа савăнтарчĕ. «Мерчен» тĕпелĕнче калем ăстисем, çыравçăсем, тавра пĕлÿçĕсем, ÿнерçĕсем, чиновниксем, общество ĕçченĕсем, тăванĕсем тата ентешĕсем пулчĕç. Çавăн пекех кунта Кушкă шкулĕнче тĕрлĕ çулта ĕçленĕ, вĕреннĕ çынсем йышлă пуçтарăнчĕç. Пухăннисем фильмпа кĕнекене пысăк хак пачĕç. Кушкă шкулĕнче вĕреннĕ Василий Яковлевпа Галина Мышкина чун-чĕререн хумханнине, ачалăха каялла таврăннăн туйăннине калаоĕс. Вĕсем тăван шкулăн историйĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе тулли кăмăлпа паллашрĕç. Калас пулать, видеофильма компьютер технологийĕсемпе анлă усă курса хатĕрленĕ. Фильм валли сăн ÿкерчĕксене режиссерăн хĕрĕ Анна пуçтарса хатĕрленĕ, шкул макетне 3D программăпа ывăлĕ Александр пурнăçланă, автор текстне мăшăрĕ Ольга вуланă. •

Пухăннă материалпа усă курса кĕнеке те хатĕрлени, фильм авторе Владимир Петрович калашле, икĕ ĕçе, пĕрпĕрне хушса, шкул историне тĕплĕнрех уçса пама пулăшнă. Калăпăр, кĕнекере шкул макетне виçĕ енлĕ хутлăхра /3D макет/ кăтартаймăн. Фильмри сăн ÿкерчĕкре кашни ачан е педагогăн ятне-шывне палăртма май çук, кĕнекере çакна тума питĕ меллĕ. Пухăннисене Владимир Галошев хăйĕн шухăш-ĕмĕчĕпе паллаштарчĕ, ыйтусене хуравларĕ.

Тухса калаçакансем Владимир Галошевăн ĕçĕ питĕ вăхăтлă пулнине, шкулсенче тăван ен культурине, историне вĕрентекенсемшĕн ырă тĕслĕх пулнине палăртрĕç. Шкулăн авалхи историне электрон майпа чĕртсе тăратма пултарнăшăн тав сăмахĕ каларĕç.

**Вера АРХИПОВА.**